# 30 КӐСӐКЛӐ ФАКТ

1. Рентген кӑтартнӑ тӑрӑх «Мона Лиза» паллӑ картина айӗнче тата унӑн виҫӗ варианчӗ пур.

2. «Happy birthday to you» юрӑн автор прави пур иккен.

3. Вестерна ӳкерекенсем хушшинче пӗртен-пӗр хӗрарӑм.

4. II-мӗш тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнче «Оскар» палӑкӗсене металла перекетлесе йывӑҫран тунӑ.

5. «Ҫилпе вӗҫсе кайнисен» оригиналлӑ ячӗ «Ме-ме, хура сурӑх».

6. 12-мӗш хутран ӳкекен кушакӑн 7-мӗш хутран ӳкекен кушакран чӗрӗ юлма шанӑҫ пысӑкрах.

8. Европа ҫыннисем пӗрремӗш хут жирафа курсан ӑна тӗвепе леопард гибридчӗ тесе «тӗвепард» ят панӑ.

9. Пуҫ мимми кӗлеткинчен пысӑкрах пӗртен-пӗр чӗр чун — каткӑ.

10. Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи чӗрӗ организмсенчен 70 проценчӗ — бактерисем.

11. Слон 4 чӗркуҫҫиллӗ пӗртен-пӗр чӗр чун.

12. Кашни ҫулталӑк Токио хулинчи зоопарк чӗр чунсем канччӑр тесе 2 уйӑхлӑха хупӑнать.

13. Муравьедсем каткӑсене мар, термитсене ҫиме юратаҫҫӗ.

14. Жираф пӑруланӑ чухне пӑрушӗ ҫур метр ҫӳллӗшӗнчен ӳкет.

15. Тӗве курпунлӑ пулсан та, унӑн ҫурӑм шӑмми тӳрӗ.

16. Кашни ҫул пыл хурчӗсем сӑхнипе ҫӗленсем сӑхнинчен ытла ҫын вилет.

17. Акулӑсен хӑрушӑ шыҫӑсенчен иммунитет пур.

18. Тинӗс ҫӑлтӑрӗ хӑйӗн ӑшчикне тавӑрса кӑларма пултарать.

19. Нумай вӑхӑт хушши шывсӑр пурӑнма пултаракан чӗр чун — йӗкехӳре.

20. Каюра пӗр каҫ хушшинче 76 метр тӑршшӗ тоннель чавма пултарать.

21. Улиткӑн 25 пине яхӑн шӑл.

22. Пӗр кунра хура ама эрешмен 20 яхӑн аҫа эрешмене ҫисе яма пултарать.

23. Авалхи Египет ҫыннисем бабуин упӑтесене официант пулма вӗрентнӗ.

24. Страус ҫӑмартине чӑмӑрла пӗҫерме 4 сехет хушши вӑхӑт кирлӗ.

25. Ленивецсен пурнӑҫӗн 75 проценчӗ ҫывӑрса иртет.

26. Колибри кайӑк утма пултараймасть.

27. Европа ҫыннисем Австрали аборигенӗсенчен: «Ҫав тӗлӗнмелле сикекен чӗр чунсен ячӗсем мӗнле?» — тесе ыйтсан, вӗсем: «Кенгуру /чӑвашла калас пулсан, «ӑнланмастпӑр»/», — тесе хуравланӑ.

28. Пӗр килограмм пыл пухма пыл хурчӗн 2 миллиона яхӑн чечек ҫине лармалла.

29. Юлашки 4000 ҫул хушшинче нимӗнле тискер выльӑха килти чӗрчун тӑвайман.

30. Библире асӑнман пӗртен-пӗр чӗрчун — кушак.

## Шкул пики



Настя Воробьева, 8 класс,
Калайкасси шкулӗ

### СМОЛЬНӐЙ

Пирӗн килте йытӑ пур.
Смольнӑй ятлӑ ҫак маттур.
Пӗр-пӗрне пит юрататпӑр,
Яланах пӗрле вылятпӑр.

Герман ЗАМЯТИН,
4-мӗш класс,
Калайкасси шкулӗ

### КУШАК

Пирӗн кушак пит ачаш,
Вӑл илемлӗ те йӑваш.
Ҫиес килсен макӑрать,
Ҫывӑрсассӑн мӑрлатать.

**Эльвира ХИСАМУТДИНОВА,**
**4 А класс, Калайкасси шкулӗ**

### КӐНАРИК

Гена, Гена, Кӑнарик
Тӑрӑшса пушмак ҫӑвать.
Ҫавра-ҫавра пӑхкалать,
Тасалсассӑн, савӑнать.

### КИЛЕ ЁҪ

Пире киле ӗҫ параҫҫӗ
Тӗрлӗрен задачӑсем.
Вӗсене вӑрт-варт шутлатӑп,
«5» паллӑ ҫеҫ илетӗп.

Артем ЯПАРОВ.

## ЧАРАКСӐР АЧА ӲСТЕРЕС ТЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ



1. Мӗн пӗчӗкрен ачана мӗн ыйтнине йӑлтах туса парӑр. Вӑл пӗтӗм тӗнче уншӑн ҫеҫ ӗҫлемелле текен шухӑша пӗчӗкренех хӑнӑхтӑр.

2. Енчен те ачапа эсир кӑнттам, йӗкӗлтесе калаҫатӑр пулсан, вӑл хӑйне ӑслӑ та тавҫӑруллӑ тесе шухӑшлӗ.

3. Ыррипе усаллине уйӑрма ан вӗрентӗр. Ҫитӗнсен вӑл хӑех уйӑрма хӑнӑхӗ.

4. Нихӑҫан та ачана, «кун-пек тусан япӑх», — тесе ан калӑр, вӑл хӑйне айӑплӑ туйма пуҫлӗ.

5. Вӑл салатнине, ҫӗмӗрнине яланах эсир пуҫтарӑр.

6. Хӑй мӗн вуласшӑн — ҫавна вулӑр.

7. Хӑвӑр хушӑри хутшӑнусене яланах ача умӗнче татса парӑр.

8. Ачана вӑл мӗн чухлӗ укҫа ыйтать, ҫавӑн чухлӗ парӑр. Хӑй ӗҫлесе ан тӗртлентӗр.

9. Яланах унӑн кӑмӑлне яланах тивӗҫтерӗр. Мӗн ҫиес килет — ҫитӗр, мӗн ӗҫес килет — ӗҫтер, мӗн тӑвас килет — тутӑр.

10. Тупӑшнӑ тата хирӗҫнӗ самантсенче яланах ача майлӑ пулӑр.

11. Енчен те ача чараксӑр пулсан эсир пурте итлемелле, «эпӗ ӑна нимӗнпе те итлетерейместӗп», — тесе калӑр.

12. Йывӑр ватлӑха, пӗччӗнлӗхе хатӗрленме тытӑнӑр. Вӑл сирӗн пулатех.